ПУЛĂМ

Юманай шкулĕ С.Архипов ячĕпе хисепленĕ

Çĕмĕрле районĕнче Аслă Çĕнтерӳ 71 çул тултарнине тата Ĕç çыннин çулталăкне халалланӑ мероприятисенчен пĕри Юманай салинче иртрĕ.

Çакă ахальтен мар: кунти шкулта çур ĕмĕр пуян чунлă çын, ăста вĕрентӳçĕ, тĕрлĕ енлĕ аталаннă йĕркелӳçĕ, Хĕрлĕ Çăлтăр, I тата II степень Тăван çĕршыв Аслă вăрçин орденĕсен кавалерĕ, 14 медале тивĕçнĕ РСФСР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ С.М.Архипов вăй хунă.

1937 çулта Етĕрнери педагогика училищинчен вĕренсе тухнă Тури Вылă каччине Çĕмĕрле районĕнчи Юманайри çичĕ çул вĕренмелли шкула ĕçлеме янă та кунта вăл мĕн виличченех, 2014 çулччен, пурăннă. 1962 çулта И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне пĕтернĕ. С.Архипова вăтам шкул пулса тăнă пĕлӳ çурчĕн директорне çирĕплетнĕ. Кунтах унăн мăшăрĕ Ольга Александровна чăваш чĕлхипе литература учителĕнче, ытти тăванĕ вун-вун çул ĕçленĕ. Архиповсен педагогикăри пĕтĕмĕшле стажĕ – 275 çул.

1970 çулсен варринче авалхи илемлĕ Юманай ялĕнче вăтам шкулăн икĕ хутлă, 320 ача вĕренмелĕх çуртне çĕкленĕ. Халăх каланӑ тăрăх, пысăк салана капăрлатнă çак кермен хĕрĕх çула яхăн ĕнтĕ Çĕмĕрле районĕнчи чи мăнаçлă палăкĕсенчен пĕри шутланать. Çак кунсенче унăн стени çине таврари чи сумлă ĕçпе вăрçă ветеранне, 1943 çулта Курск пĕккинчи хаяр çапăçура паттăрлăх кăтартнă С.М.Архипов ячĕпе Асăну хăми çакни те çак сăмахсене тепĕр хут çирĕплетет.

– Севастиан Михайлович Çĕмĕрле тăрăхĕнчи вĕрентӳ аталанăвĕн историйĕнче чи паллă сăнарсенчен пĕри. 1960 çулсенче Юманай шкулĕ çинчен таврара никамах та пĕлместчĕ. Юлашки çур ĕмĕрте кунтан вĕренсе тухнисем республикăри министерствăсемпе ведомствăсене ертсе пынă, Раççей Президенчĕ çумĕнчи Чăваш Республикин полномочиллĕ представителĕ Леонид Волков та кунта ăс пухнă. Наука докторĕсемпе кандидачĕсем /çирĕме яхăн/, паллă çĕр ĕçченĕсем, интернационалла тивĕçе тĕрлĕ çĕршывра чыслăн пурнăçланӑ паттăрсем пулса тăнă çак шкул выпускникĕсем. Районти депутатсен Пухăвĕн тата район администрацийĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн асăннă вăтам шкул малашне Севастиан Архипов ячĕпе хисепленĕ, – терĕ Асăну хăми уçăлнă ятпа иртнĕ митингра район администраци пуçлăхĕ Л.Рафинов.

Митингра Севастиан Михайловичпа 1930 çулсенче Штанашри шкулта тата Етĕрнери педагогика училищинче пĕрле вĕреннĕ висĕ вăрçă участникĕ А.Яковлев, ЧР Вĕренӳ институчĕн ректорĕ С.Савин, Чăваш патшалăх университечĕн профессорĕ, "Элĕк ачи" ентешлĕх ертӳçи В.Иванов, Чăваш халăх писателĕ Юхма Мишши, Чăваш халăх, Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ художникĕ Праски Витти, ыттисем сăмах каларĕç. Раççей халăх артисчĕ Петр Заломнов, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Светлана Асамат тата вырăнти артистсем юрăсем шăрантарчĕç.

■ **Петр СИДОРОВ**